26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
МАРТ
9
ЫТЛАРИКУН
54(6291) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Комсомол активĕпе ялхуçалăхĕнче малта пыракан çамрăксен республикăри канашлăвĕ Чăваш республикинчи колхозсенчи, совхозсенчи тата МТС-сенчи комсомолецсемпе комсомолкăсене, ялти мĕнпур çамрăксене

ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Вунтăхăр уйăх ытла ĕнтĕ совет халăхĕ Германи фашизмне хирĕç отечественнăй аслă вăрçă туса пырать. Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă тĕле Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ каларнă приказпа хавхаланса, тăван çĕршыва паттăррăн хӳтĕлекенсем çĕнтерӳллĕн малалла кайса пыраççĕ. Хăйсен юнне те, пурнăçне те шеллемен совет воинĕсем нимĕç оккупанчĕсене çĕмĕреççĕ, фашистсен пусмăрĕнчен çĕнĕрен те çĕнĕ хуласемпе ялсене ирĕке кăлараççĕ.

Çак историллĕ кунсенче колхозлă ялăн çамрăк патриочĕсем хăйсен вăрçăри тусĕсемпе — Хĕрлĕ Çар воинĕсемпе, танлашса пырас тесе тăрăшаççĕ. Фронтовиксен паттăр ĕçĕсемпе хавхаланса, вĕсем пĕтĕм вăй-хала тăван Хĕрлĕ Çара пулăшас ĕçе, тăшмана аркатса тăкас ĕçе хураççĕ.

Иртнĕ ялхуçалăх ĕçĕнче Чăваш республикинчи çамрăксем начар мар ĕçлерĕç. Çамрăксем 235 пин тенкĕлĕх ытла запаслă пайсем пухрĕç, 7.500 машина юсарĕç. Çĕршер, пиншер çамрăксен бригадисем вăрçă вăхăтĕнчи тырпула пухса кĕртес тĕлĕшпе ĕçлерĕç. Пионерсемпе шкул ачисем 140 пин çын çуллахи вăхăтра 4.183.000 ĕçкунĕ тунă. Республикăри комсомолецсемпе çамрăксем «Комсомолец Чувашии» ятлă боевой самолетсем тума 11 миллион тенкĕ ытла укçа пухрĕç, аслă Сталин саламне тивĕçлĕ пулчĕç.

Анчах çак ĕçсемпе лăпланса ларма юрамасть. Юрамасть, мĕншĕн тесен пирĕн умра тăшмана хирĕç хаярлăн кĕрешес задача тăрать. «Хĕрлĕ Çарăн, — тет Сталин юлташ хăйĕн приказĕнче, —малашне те тискер те ултавлă, халлĕхе вăйлă тăшмана хирĕç хаярлăн кĕрешсе пымалла пулать. Çак кĕрешӳ вăхăт, жертвăсем ыйтать, хамăрăн мĕнпур вăя хума тата мĕнпур майсене мобилизацилеме ыйтать».

Хĕрлĕ Çара хĕçпăшалпа боеприпассем кăна мар, çавăн пекех ăна çăкăр, аш-какай, пахча-çимĕç те кирлĕ. Пирĕн промышленноçа чĕртавар кирлĕ. Колхозри комсомолецсемпе комсомолкăсен, пĕтĕм ялти çамрăксен тивĕçлĕхĕ — фронта мĕн кирлине пĕтĕмпех парса тăрасси.

Вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш çуркунне çывахрса килет. Хăйсен пĕтĕм пултарулăхне палăртса çакăнта ĕнтĕ ялти çамрăксен хăйсен хаклă аллине хумалла.

Пирĕн пирвайхи тĕп задача — уйхирсене пысăк тухăçлă тăвасси, кашни гектартанах тĕштырă, çĕрулми, пахча-çимĕç, техникăллă культурăсем ытларах илмелле тăвасси пулать. Тырпул тухăçлăхĕн никĕсне çуракинче хываççĕ. Çакăнтан ĕнтĕ çураки кампанине ирттерме тĕплĕн хатĕрленме кирли тухса тăрать. Çак боевой ĕçĕн организаторĕсем тата ертсе пыраканĕсем — кашни колхозра, совхозра, МТС-ра комсомолецсемпе çамрăксем пулмалла.

Пĕтĕм вăя çуракине кăтартуллăн хатĕрленсе вăхăтра тата пысăк пахалăхпа ирттерессине хумалла. Çаксене ĕнтĕ ĕç вăйне тĕрĕс вырнаçтарса тухсан, вăхăтăн кашни сехечĕпе туллин усă курма пĕлсен, пур резервсене те мобилизацилесен çеç пурнăçлама пулать.

Çак задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртес тесе, эпир çак ĕçсене тума кирлĕ тесе шутлатпăр:

1. Апрелĕн 10-мĕшĕ тĕлне тракторсене, ялхуçалăх машинисемпе ĕç инвентарьне пурне те юсаса пĕтĕмпех хатĕрлесе çитермелле. Çав шутпала, Мускав комсомолецĕсенчен пример илсе, колхозри тимĕрçлаççисене йĕркелесе çитермелле; кăмрăк хатĕрлесе хумалла, тимĕр-тăмăр пухмалла, çитеймен ĕç инвентарьне тупса хумалла. Кашни колхозра тимĕрç пултăр тесе, комсомолецсемпе комсомолкăсене, çамрăк колхозниксене тимĕрç ĕçне вĕрентмелле. Тракторсемпе ытти ялхуçалăх машинисем валли запаслă пайсем хамăр вăйпа туса хатĕрлемелле. МТС-сен килхушшинче, мастерскойсенче тивĕçлĕ йĕркелĕх туса çитермелле.

2. Вăрлăхсене хатĕрлесси çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла: мартăн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр вăрлăхсене тасатса, вĕсен шăтас пахалăхне тĕрĕслесе хумалла. Çав шутпа çак кунсенчех вăрлăх çителĕклĕ таран уйăрнипе уйăрманнине тĕрĕслемелле, пур культурăсем тăрăх та — харпăрхăй запасĕсенчен илсе-и, урăх колхозран кивçен илсе-и — вăрлăх уйăрса хумалла. Вăрлăх тĕрĕслекен станцисем урлă вăрлăх пахалăхне тĕрĕслесе вĕсене акмалли кондицие çитермелле. Колхозсенче вăрлăх сортлакан çамрăксен бригадисене тумалла. Страховой фондсене уйăрмалла, çуракин государство планĕсене ирттерсе тултармалли тата оборона гектарĕсем акмалли вăрлăхсене хатĕрлемелле. Çимелли çĕрулми тăррисене вăрлăхлăх касса хатĕрлессине анлăн туса пымалла, кашни комсомолец, кашни пионер 8 килограмран кая мар çĕрулми тăрри касса хатĕрлемелле. Хатĕрленĕ вăрлăха тĕрĕс пăхса усрамалла.

3. Хĕллехи агротехникăллă мероприятисене пĕтĕмпех ĕçе кĕртмелле. Çав шутпа çуркуннеччен пур пек тислĕке пĕтĕмпех уя кăлармалла, пысăк купасем туса хумалла; кĕл тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хатĕрлемелле, минераллă удобренисем туртарса килмелле. Çак ĕçе пĕтĕм колхоз çамрăкĕсене, шкул ачисемпе пионерсене мобилизацилемелле. Кашни комсомолец, кашни шкул ачи 50 килограмран кая мар кĕл тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрлемелле. Кашни колхозрах вăйлă тырпулшăн кĕрешекен комсомолецсемпе çамрăксен звенисене тумалла.

Çамрăксемпе пĕтĕм колхозниксем хушшинче агротехникăна вĕренессине пуçарса ямалла. Ялхуçалăхĕн пур культурисене те пысăк тухăçлăхпа туса илес шутпа машинăпа акасси çине ытларах çавăрăнса пăхмалла, яровизаци т. ыт. ĕçсене те тумалла.

4. Çураки валли чĕрĕ туртăм вăйне кирлĕ пек хатĕрлемелле. Çавăнпа та колхоз лашисене лайăх пăхмалла, ялхуçалăхĕнче майракаллă шултăра выльăхпа анлăн усă курмалла. Колхозсенче лашасене мĕнле пăхнине палăртас тĕлĕшпе смотрсем туса ирттермелле, ырхан лашасене лайăхрах тăрантарма уйăрмалла, чирлĕ лашасене сыватмалла. Лаша таврашĕсене пĕтĕмпех пухмалла, юсамалла, çитменнисене вырăнтах туса хатĕрлемелле. Выльăх-апатне тĕрĕс тăкакланине, упранине тĕрĕслесе пымалла. Конюхсен ретне çирĕплетмелле, лашасене пăхма юратакан çамрăксене конюхсем тумалла. Комсомолăн кашни организацийĕн вăйĕпе майракаллă шултăра выльăха икĕ мăшăртан кая мар кӳлме вĕрентмелле. Лашасене, кӳлсе çӳреме вĕрентнĕ майракаллă шултăра выльăха, урапа таврашне, ĕç инвентарьне уйхир бригадисем çумне çирĕплетсе парса ку ĕçри обезличкăна пĕтермелле.

5. Механизаторла тата колхозри ытти кадрсене çителĕклĕ таран хатĕрлемелле. МТС курсĕсенче тата механизаци шкулĕсенче вĕренекенсене пур майсемпе те пулăшмалла, вĕсене вĕренме кирлĕ условисем туса памалла, трактористсем, комбайнерсем, механиксем пулма хатĕрленекен çамрăксене чăн-чăн большевикла воспитани памалла. Кашни группа çумне чи лайăх агитаторсем çирĕплетмелле, вĕсене çамрăксем хушшинче калаçусем ирттерме пулăшмалла, хаçатсемпе журналсем тăратмалла, боевой листоксемпе стена хаçачĕсем кăлармалла. Колхозсен массăллă кадрĕсене хатĕрлеме комсомолецсемпе комсомолкăсене, ялти малта пыракан çамрăксене уйăрмалла, вĕсен вĕренĕвне лайăх йĕркелемелле.

Уйхир ĕçĕсенче трактористсем валли тивĕçлĕ, культурăллă условисем тăвас шутпа, кашни трактор бригади валли будка-вагончик туса ăна культурăллă йĕркелемелле, тракторсем çинче фанертан кабинăсем тумалла, трактористкăсем валли ларчăксене çемçетсе тумалла.

6. Çуракине хатĕрленсе ирттерес тĕлĕшпе массăллă-политикăллă ĕçе анлăн сармалла. Кашни бригадăрах политикăллă агитаци ĕçне пĕрмаях туса пымалла, хаçатсем вуласа парса калаçусем ирттермелле, Совинформбюро пĕлтерĕвĕсене, партипе правительство решенийĕсене ăнлантарса памалла. Кашни уйхир бригади çумнех çак шутпа тивĕçлĕ агитатор уйăрса çирĕплетмелле. Вăл агитатор хăй те уйхир ĕçне хутшăнса ĕçлесе çуракине хăвăрт тата пысăк пахалăхпа ирттересшĕн социализмлă ăмăрту организацилемелле. Стена хаçачĕсене, боевой листоксене яланах кăларса тăмалла, кăтартуллă хăмасем тумалла, вĕсен урлă çуракине мĕнле хатĕрленнине, вăл мĕнле иртнине пĕрмаях çутатса тăмалла, малта пыракансен ĕçне ырласа, кахалсене тăрă шыв çине кăларса пымалла.

Хаçатсене тӳрех уя, бригадăсене илсе пырассине организацилемелле.

7. Пĕтĕм ĕçре паттăр фронтовиксенчен пример илсе тăмалла. Çуракинче кăтартуллă ĕçлемелле, нормăна 2—3 хут ӳстерсе пурнăçа кĕртмелле. Тăван çĕршыва тата Ленинпа Сталин партине чĕререн парăнса тăнине комсомолецсемпе комсомолкăсем, ялти пĕтĕм çамрăксем ĕçпе кăтартса памалла. Иртен пуçласа сĕм тĕттĕмччен ĕçлемелле, ĕçе тĕрĕс организацилемелле, ялхуçалăх машинисемпе туллин усă курмалла, горючине тата сĕрмелли материалсене пур майсемпе те перекетлемелле, — çакăн пек пирĕн боевой лозунг!

Комсомолецсемпе комсомолкăсем! Колхоз çамрăкĕсем! Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар, пирĕн социализмлă тăван çĕршыв пире колхоз уйхирĕнче тăрăшса ĕçлеме хушать. Фронтпа тыла пирĕн тырă, аш, çĕрулми, пахча-çимĕç, промышленность валли чĕртавар ытларах та ытларах парса тăмалла. Çакна тума пире аслă Сталин чĕнет.

Çуракине лайăх хатĕрленсе ирттерес ĕçре боевой организаторсем пулăр. Вăрçă вăхăтĕнчи тухăçлă тырпулшăн колхозсем, бригадăсемпе звеносем, колхозниксем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарăр. Чăваш АСС-ĕнчи колхозсен пĕтĕм ĕçне лайăхлатăр. Комсомолецсем, союзра тăман çамрăксемпе тачăрах çыхăнăр, вĕсенчен малта пыракансене комсомол ретне хутшăнтарăр. Вăрçă вăхăтĕнчи пысăк тухăçлă тырпулшăн похода тухăр!

Çуракине вăхăтра тата пысăк пахалăхпа ирттерĕр!

Уйхирте, пахчасенче, фермăсенче çине тăрса ĕçлесе, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене тĕппипех çĕнтерессине хăвăртлатăр!

Ленинпа Сталин партийĕн ялавĕпе, юратнă çулпуç тата полководец аслă Сталин ертсе пынипе — çĕнтерӳ патне, малалла!

Пирĕн Маршал Сталин юлташ ертсе пынипе эпир тăшмана çĕнтеретпĕр

СЕНТЕР. «Новый путь» колхоз членĕсем, Хĕрлĕ Çар наступлени туса пынипе хавхаланса тата СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсен Верховный Главнокомандующине Иосиф Виссарионович Сталина çар званийĕ — Совет Союз Маршалĕн званине панă Указа итленĕ хыççăн, ĕçе çĕнĕ çĕкленӳпе туса пыма тытăнчĕç. Колхозниксем вăрман касса хатĕрлемелли сезонри плана мартăн 20-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмĕшпех тултарма пулчĕç, мартăн 13-мĕшĕ тĕлне колхоз ялхуçалăх машинисене, транспорт инвентарĕпе хăмăт-пăявĕсене пĕтĕмĕшпех юсаса çитерессишĕн кĕрешет. Ытти енĕпе колхоз çуракине тухма хатĕр.

Сталин юлташа Совет Союз Маршалĕн званине пани халăх кăмăлне çĕклет. Совет Союзĕн Маршалĕ аслă Сталин юлташ ертсе пынипе совет халăхĕ гитлерла захватчиксене — нимĕç фашисчĕсене тĕп тăвĕ. Колхозниксем, колхозницăсем Верховный Главнокомандующине Сталин юлташа Совет Союз Маршалĕн званине илнĕ ятпа саламлаççĕ.

А. Гусев,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

ХАСТАРЛĂ ТИМĔРÇĔ

Ялхуçалăхĕнчи кашни çынăн халь Хĕрлĕ Çара ĕçпе пулăшса тăмалла. Çуракине хатĕрленсе лайăх туса ирттерес ĕçре колхоз тимĕрçисем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Вĕсем ялхуçалăхĕнчи машинăсене лайăх юсани, ĕçе хатĕрлени çураки ăнăçлă иртессине татса парать.

Эльменти Пушкин ячĕпе тăракан колхоз тимĕрçи (Калинино районĕ) Т. Малов юлташ февралĕн 23-мĕшĕ тĕлне икĕ касăллă плугсем 24, пĕр кассăллă плугсем 12 тата 4 сеялка, 5 тимĕр сӳре, пĕр триер юсаса лартрĕ. Терентий Малов — ăста тимĕрçĕ. Ĕçе хăвăрт туса пынипе пĕрлех вăл колхозниксене тимĕрçĕ ĕçне вĕрентсе пырать

Б. Шовнчков.

Юлашки сехетре

Пирĕн войскăсем СЫЧЕВКА хулине йышăнса илнĕ

Мартăн 8-мĕшĕнче, икĕ кун хушши пынă вăйлă çапăçусем хыççăн, пирĕн войскăсем, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе, Вязьма хулинчен çурçĕререхре СЫЧЕВКА хулипе чугунçул станцине йышăнса илнĕ.

Сычевка еннелле Сычевкăшăн пынă çапăçусенче пирĕн войскăсем çакăн пек трофейăсем ТЫТСА ИЛНĔ: самолетсем—8, танксем—310, тĕрлĕ калибрлă орудисем—40, пулеметсем—250, паровозсем—22, вагонсемпе чугунçул цистернисем—215, çавăн пекех снарядсемпе минăсем, патронсем тата ытти çар пурлăхĕсем нумай.

Тăшманăн, вилнисене кăна шутласан та, 8.000 салтакпа офицерĕ пĕтнĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

—o—

Хĕрарăмсен Пĕтĕм тĕнчери коммунистла Кунне Шупашкарта уявлани

Ĕнер, мартăн 8-мĕшĕнче, Советсен çурчĕн ларусен залне хулари хĕрарăмсен активĕ пухăнчĕ. Кунта Шупашкар хулинчи партипе совет тата обществăллă организацисен хулари хĕрарăмсен активĕпе пĕрле, Хĕрарăмсен Пĕтĕм Тĕнчери Коммунистла Кунне уявласа, чаплă лару пулса иртрĕ.

Лару президиумĕнче партипе совет организацисен руководствинчи тата промышленность предприятисемпе учрежденисенчи хăйсене ĕçре кăтартнă хĕрарăмсем, ВКП(б) Обкомĕпе хула комитечĕн секретарĕсем тата пирĕн земляк—Совет Союзĕн Геройĕ Ф. Орлов юлташ.

Тăвăллăн алă çупса канашлу чаплă президиума Совет Союзĕн аслă Маршалне Верховный Главнокомандующи Сталин юлташа тата вăл ертсе пыракан ВКП(б) Центральный Комитечĕн политбюро составне суйларĕ.

Лару Хĕрарăмсен Пĕтĕм Тĕнчери Коммунистла Кунĕ çинчен СССР Верховный Совечĕн депутачĕн ЧАССР Верховный Совет Президиум Председателĕн Зоя Ананьевна Андреева юлташăн докладне итлерĕ.

Чаплă лару ССР Союзĕн Маршалĕ аслă çулпуç Сталин юлташ патне пĕр шухăш-кăмăллă пулса саламлă çыру яма йышăнчĕ.



☆ ☆ ☆

СОВЕТ СОЮЗĔН ГЕРОЙĔ Ф. Н. ОРЛОВ ТĂВАН ЯЛĔНЧЕ

Район центрне—Советское ялне çитсенех Федот Никитич Орлов хăй ача чухне вĕреннĕ шкула кайрĕ. Хăй ларнă партăна, хăй ларнă класа Федот Никитич лайăх астăвать. Халь унта çĕнĕ çынсем, пирĕн телейлĕ çамрăксем вĕренеççĕ. Шкулта мухтавлă земляка хаваслăн кĕтсе илчĕç.

— Эсир, ачасем, телейлĕ,—тет Федот Никитич,—пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар сире лайăх хӳтĕлет. Партă хушшине ларса лăпкăн вĕренме май парать. Сире хӳтĕлес тесе эпĕ хам вăя та сахал мар хутăм. Эпĕ нимĕçсен 93 самолетне пĕтерсе тăкрăм, фашистсен 60 танкне çунтарса ятăм, нимĕçсене нумай вĕлертĕм, пĕр каçра кăна 132 нимĕç офицерне леш тĕнчене ăсатрăм. Нумай эшелонсене ӳпĕнтере-ӳпĕнтере ятăм. Халĕ çавсем, эпĕ вĕлернĕ нимĕçсем, эпĕ çунтарса янă танксемпе самолетсем, пире хирĕç вăрçаймаççĕ. Пирĕн хуласемпе ялсене çунтараймаççĕ. Çав ĕçшĕн мана Герой ятне пачĕç. Ачасем, лайăх вĕренĕр! Эпĕ хамăн ĕçе малалла та шанчăклăн туса пырăп. Нимĕçсене пĕр хĕрхенмесĕр вĕлерсе пырăп. Сире хӳтĕлĕп.

Ачасем Совет Союзĕн Геройне Ф. Н. Орлова хаваслăн алă çупса саламлаççĕ. Вĕсем паттăр соколăн ĕçне лайăх ăнланаççĕ.

Герой—тăван ялĕнче. Кунта вăл ача чухне кĕтӳ кĕтнĕ, ыйткаласа çӳренĕ. Ăна пурте астăваççĕ. Халь вăл яла герой пулса таврăнчĕ. Ун кăкăрĕ çинче Ылттăн çăлтăр. Федот Никитич тăван ялĕнчи «Большевик» колхоз мĕнле ĕçленипе интересленет. Правлени умĕнче плугсем тăраççĕ. Федот Никитич хăйĕн вăйлă аллипе пĕр плуга çĕклет те:

— Кунта тимĕрçĕ алли пулман-ха, —тет.

Колхозниксем ăнланаççĕ. Вăхăт кĕтмест. Васкамалла. Плугсене, сӳресене, ытти ĕç хатĕрĕсене юсамалла. Колхозниксем герой умĕнче тупа тăваççĕ—лайăх ĕçлемелле, паттăр герой ятне тивĕçлĕ пулмалла.

Акă Федот Никитич Орлов райком секретарĕсемпе райĕçтăвком председателĕсен семинарĕнче. Советскине 3—4 районран çынсем пухăннă. Обком секретарĕ Т. Ахазов юлташ Орлов юлташа сăмах парать.

Совет Союзĕн Геройĕ Ф. Н. Орлов юлташ пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар нимĕçсен çарĕсене вăйлăн аркатса пыни çинчен, хăйĕн боевой ĕçĕсем çинчен каласа парать.

— Эсир, райком секретарĕсем райисполком председателĕсем — командирсем.. Эсир кунта, тылра, пысăк çарсене ертсе пыратăр. Лайăх ертсе пырăр. Сире халăх шанать, Хĕрлĕ Çар шанать. Çак аслă çапăçура эпир çĕнтеретпĕр.

Тĕрĕс калать паттăр воин —Совет Союзĕн Геройĕ капитан Ф. Н. Орлов. Çак аслă çапăçура эпир çĕнтеретпĕр!

А. ЭСХЕЛЬ.

ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн пленумĕ

Мартăн 6-мĕшĕнче ВКП(б) Шупашкар Горкомĕн черетлĕ иккĕмĕш пленумĕ пулса иртрĕ. Пленума ВКП(б) Обкомĕпе Горкомĕн секретарĕ И. М. Чарыков юлташ уçрĕ.

ВКП(б) Горкомĕн секретарĕ Федоров юлташ военнослужащисен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе совет органĕсемпе вырăнти парторганизацисен ĕçĕсене лайăхлатасси çинчен доклад туса пачĕ.

Фротовиксен çемьисене пулăшни —паттăр Хĕрлĕ Çаршăн тăрăшни пулать. Ку ĕçпе парти, совет, общество тата хуçалăх организацисем, предприятисемпе учрежденисем тата колхозсем пурте ĕçлемелле. 1942 çулта военнослужащисен çемьисене Шупашкарта 2.370 пин тенкĕ ытла укçа тӳленĕ, 18 пин кубометр вутă панă, 6 пин мăшăр трикотажнăй изделисем, 500 мăшăр атă-пушмак, ваткăллă 500 пальто илсе панă. Фронтовиксен 1.250 ачине ача сачĕсемпе яслисене вырнаçтарнă.

Анчах та ку ĕçре çитменлĕхсем те сахал мар. Горисполкомпа унăн отделĕсем, предприятисемпе учрежденисен руководителĕсем, пуçламĕш парторганизацисемпе профсоюз организацисем фронтовиксен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе тата отечественнăй вăрçă инвалиĕсене ĕçе вырнаçтарас тĕлĕшпе мĕн кирлине пурне те туса çитереймен. ВКП(б) Горкомĕ партипе правительство фроновиксен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе йышăннă решенисем мĕнле пурнăçланнине çителĕклĕ контроль туса пырайман. Фронтовиксен çемьисем çине чунсăррăн пăхакан уйрăм руководительсене вăхăтра тивĕçлĕ ответ тыттарман.

Докладчик тата пренире тухса калакансем ку ĕçе тĕпренех лайăхлатма кирлине кăтартрĕç. Кириллова юлташ (Гороно) Хĕрлĕ Çар боецĕсен ачисемшĕн лайăхрах тăрăшма кирлине палăртать. Шкулсем вĕсене çителĕклĕ пулăшмаççĕ. Тумтир тата атă-пушмак çуккипе вĕсенчен хăшĕпĕрисем вĕренме пăрахрĕç. Çуркунне çывхарса килнĕ май, ачасен атă-пушмакĕсене юсассине организацилес пулать, ачасене тумтир тупса парас пулать. Учитель-фронтовиксен çемьисем çинчен те манса хăвармалла мар.

Тютиков юлташ (Облвоенкоматăн политотдел начальникĕ) фронтовиксен çемьисене пулăшас ĕç хулара ку таранччен плансăр пулса пынине асăрхаттарать. Горжилуправлени хваттершĕн тӳлессинче çăмăллăх парассине тивĕçлипе организацилемен.

Фронтовиксен арăмĕсен совечĕ çак тĕлĕшпе пысăк ĕç тăвать, анчах ВКП(б) Горкомĕн ăна пулăшас пулать. Хулари ачасен столовăйĕсен ĕçĕсене лайăхлатмалла, фронтовиксен çемьисем валли пахча-çимĕçсем туса илме çĕр участокĕ уйăрасси çинчен шутласа пăхма та вăхăт ĕнтĕ.

Красовицкая юлташ (Горсобес) отечественнăй вăрçă инваличĕсем валли çĕвĕ çĕлекен тата ремонтнăй мастерскойсем уçма кирли çинчен калать. Шуникова юлташ (Н-ски завод) çĕвĕ тата атă çĕлекен мастерскойсен ĕçĕн лайăх енĕсене палăртать. Ĕç вăхăчĕ хыççăн вĕсем ачасем валли кĕпесем çĕлеççĕ, атă-пушмак юсаççĕ.

Федоров юлташăн докладне сӳтсе-явнă çĕре çавăн пекех Блошенко, Баркан, Кузнецова (горисполком), Мицин (инвалидсен артелĕ), Рыбакова (пир-авăр фабрики) юлташсем хутшăнчĕç.

Пленум çак ыйту тăрăх йышăннă резолюцире фронтовиксен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе тĕрлĕ ĕçсем тума палăртрĕ. Военнослужащисен çемьисене пулăшас шутпа, мартăн 15-мĕшĕнчен пуçласа 25-мĕшне çити вăхăтра вунăкунлăх ирттерме йышăннă.

Пленум коммунистсене, комсомолецсене, хулари ĕççыннисене пурне те фронтовиксен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе пур майсемпе те усă курса ĕçлеме чĕнчĕ.

Пленум организациллĕ ыйтусем сӳтсе-яврĕ. ВКП(б) Горкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕн заведующийĕ пулма С. М. Ислюков юлташа, оргинструкторски отделĕн заведующийĕ пулма В. И. Шаронова юлташа, çарĕç отделĕн заведующийĕ пулма Н. И. Чурбанов юлташа çирĕплетрĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Мартăн 7-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Мартăн 7-мĕшĕнче пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех наступлениллĕ çапăçусем туса пынă.

Баренц тинĕсĕнче пирĕн карапсем тăшманăн 6 пин тонна водоизмещениллĕ транспортне пуçарнă.

Иртнĕ эрнере, февралĕн 28-мĕшĕпе мартăн 6-мĕшĕ хушшинче, сывлăшри çапăçусенче тата аэродромсенче нимĕçсен 129 самолетне пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăт хушшинче пирĕн 76 самолет пĕтнĕ.

* * *

Мартăн 6-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче 5-рен кая мар танк тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 100 автомашина ытла пĕтерсе тăкнă, артиллерин 10 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен 2 складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Гжатскран хĕвеланăçнерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем, тăшман вăйлăн хирĕç тăнине çĕнтерсе, малалла куçса пынă. Пирĕн чаçсем халăх пурăнакан 74 пункта йышăнса илнĕ. Трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ.

* * *

Оленино-Чертолино хулисенчен кăнтăртарахра пирĕн чаçсем ăнăçлăн малалла тапăнса пынă. Совет боецĕсем тăшмана пысăк çухатусем тӳстереççĕ, пĕр чарăнмасăр хăвалаласа пырса, ăна оборонăн çĕнĕ рубежĕсенче çирĕпленсе ларма памаççĕ. Пĕр кун хушшинче пирĕн чаçсем халăх пурăнакан 20 пункта нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен тасатнă. Трофейăсем тытса илнĕ.

Пирĕн зенитнăй артиллери нимĕçсен 8 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре Н-ски чаçăн боецĕсем чăрмавсене тата тăшман вăйлăн хирĕç тăнине çĕнтерсе, унăн окопĕсене кĕрсе кайнă. 200 салтакпа офицера çити вĕлернĕ, 4 миномета тата 18 пулемета пĕтерсе тăкнă, 2 дзотпа 13 блиндажа ишĕлтернĕ. Сапер-разведчиксем Журавлевпа Романович юлташсем тăшманăн тылне кĕрсе кайнă та чугунçула темиçе тĕлте сирпĕнтерсе янă.

* * *

Ворошиловградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре артиллерин Н-ски чаçĕ, пехотăпа çыхăнса кĕрешсе, юлашки çапăçусенче нимĕçсен 14 танкне, 8 бронемашинине тата çар грузĕсем тиенĕ 25 автомашинине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Севскран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем малалла тапăнса пынă. Н-ски чаçăн боецĕсем халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ, 2 оруди, 14 пулемет, 5 миномет тата тумтир складне тытса илнĕ. Н-ски соединенин чаçĕсем 3 кун хушши çапăçса нимĕçсен 1000 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăт хушшинчех трофейăсем те тытса илнĕ, трофейăсем хушшинче 29 оруди пур, вĕсенчен 4-шĕ—хăй тĕллĕн çӳрекеннисем, тата çар пурлăхĕн 2 склачĕ пур.

* * *

Çурçĕр-хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Н-ски соединенин чаçĕсем атакăласа халăх пурăнакан пункта, вăйлă тĕреклетнĕскере, тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн çĕршер вилли выртса юлнă тата нимĕçсем пăрахса хăварнă хĕçпăшалсем нумай выртса юлнă.

* * *

Черниговь облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен отрядри партизансем нимĕç помещикĕн пăсмине çĕмĕрсе кĕрсе кайнă. Пăсман хуралĕ хăраса тарнă. Халăхшăн тавăракансем тырă тултарнă элеватора çунтарса янă, çав тырра гитлеровецсем хресченсенчен туртса илнĕ пулнă; партизансем тата помещикĕн выльăхне хăваласа кайнă. Çав отрядри партизансен пĕр ушкăнĕ чугунçулăн пĕр участокне минăласа хунă. Нимĕçсен боеприпассем турттарса пыракан эшелонĕ сирпĕнсе кайса айккинелле йăванса кайнă. Совет патриочĕсем юлашки кунсенче тата 3 паровоза, çар пурлăхĕ тиенĕ 40 вагона пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Харьков облаçĕнчи Мерефа хулинчен тухса каяс умĕн мирлĕ пурăнакан çынсене вĕлерсе çӳренĕ. Фашистла пуçкасакансем Ржав урамĕнче кăна 11 çынна персе вĕлернĕ. Киев урамĕпе Новопроездная урамĕнче вĕсем малтан тĕл пулнă çынсене — Иван Писаренкăна, Карп Сергиенкăна тата ыттисене те персе вĕлернĕ. Хуларан каялла чакнă чухне фашистла ирсĕрсем нумай кварталсемпе урамсене çунтарса янă. Бандитсем хваттерсене кĕрекĕре кайса япаласене крассин сапнă та çуртсене çунтарса янă.

* * *

Бельги патриочĕсен ушкăнĕ Льеж сывăхĕнчи çар заводне кĕрсе кайнă та унтан ручной пулеметсем нумай илсе тухнă. Мехелон хулин районĕнче бельгиецсен хĕçпăшаллă отрячĕ 11 нимĕç мотоциклетисне вĕлернĕ. Нивель хулинчен инçех мар вырăнта Бельги патриочĕсем нимĕçсен çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă.

Мартăн 8-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Мартăн 8-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех наступлениллĕ çапăçусем туса пынă.

* * *

Гжатскран хĕвеланăçнерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем наступлени туса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Н-ски часть халăх пурăнакан пĕр пунктшăн пынă çапăçура нимĕç пехотин икĕ ротине çити пĕтернĕ. 5 оруди, 17 пулемет тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн подразделенисем тăшманăн тылне кĕрсе кайнă. Хупăрласа илессинчен хăраса гитлеровецсем пĕр йĕркесĕр каялла чакнă.

* * *

Оленинăран кăнтăртарахра пирĕн чаçсем хаяррăн çапăçнă хыççăн тăшманăн çирĕплетнĕ 6 узелне тытса илнĕ. 7 оруди, 13 миномет, 26 пулемет тата 600 гитлеровеца ытла пĕтернĕ. Трофейăсем тата тыткăна илнисем пур.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре пирĕн чаçсем тăшман çине артиллерипе тата минометсемпе персе тăнă. Пирĕн артиллери 10 дзотпа блиндажа çĕмĕрнĕ, 4 оруди тытса илнĕ. Тăшман пехотин ушкăнне сапаласа янă. Н-ски чаçăн боецĕсем тăшманăн окопĕсене кĕрсе кайнă та гитлеровецсен çухатнă позицисене каялла илес шутпа тунă контратакине сирсе янă. Çав çапăçура нимĕçсен 100 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă.

Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллерин вучĕпе нимĕçсен 5 самолетне персе антарнă.

* * *

Ворошиловградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн чаçсем тăшманăн танкĕсен йышлă вăйĕпе тата мотопехотипе çапăçнă. Пĕр участокра нимĕçсем çапăçăва мотопехота тата 60 танк кĕртсе янă. Совет боецĕсем нимĕçсен пĕр батальонне яхăн пĕтернĕ, тăшманăн 12 танкне çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ, тăшмана малтанхи позицисем патнелле чакарнă.

* * *

Севскран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем наступлени туса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Хирĕç тăма хăтланнă нимĕçсен уйрăм гарнизонĕсене пĕтерсе тăкнă. Пĕр участокра тăшман контратака тума пуçланă. Совет боецĕсем гитлеровецсене ывăтса янă, вĕсене хăваласа пырса, халăх пурăнакан пысăк пункта тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 300 вилли выртса юлнă. Тыткăна илнисем тата трофейăсем пур.

* * *

Гомель облаçĕнче çапăçакан партизансен пĕр отрячĕ февраль уйăхĕнче нимĕçсен 8 полицейски участокне çĕмĕрсе тăкнă. Тăшманпа çапăçса тата засадăсенчен персе 100 гитлеровеца ытла вĕлернĕ. Совет патриочĕсем 2 пулемет, 80 винтовка тата нумай патронсем тытса илнĕ. Çав вăхăт хушшинче партизансем нимĕçсен 3 çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. 2 паровоз тата 20 вагон çĕмĕрĕлнĕ.

* * *

7-мĕш пехотнăй дивизийĕн 19-мĕш полкĕнчен Хĕрлĕ Çар енне куçнă салтак Герберт Н. çапла каласа панă: «Сталинград патĕнче нимĕçсен 6-мĕш армине пĕтернĕ пирки Германире виçĕ кунлăх траур туни пире хытă тĕлĕнтерчĕ. Юлашки вăхăтсенче салтаксем пĕрмаях вăрçă мĕнпе пĕтесси çинчен калаçаççĕ. Нумаях пулмасть пĕр обер-ефрейтор çапла каласа пачĕ: «Виçĕ кунлăх траур вăл пуçламĕшĕ кăна-ха. Малта траур кунĕсемпе уйăхĕсем нумай пулĕç».

Госпитальсенчен тавăрнакан салтаксем каласа панă тăрăх, Германире çар службине юрăхлă арçынсене пурне те мобилизациленĕ. Зенитнăй чаçсен тата сывлăшри оборона войскисен салтакĕсене пепотинецсем туса фронта янă. Вĕсене çар службинче пулма пултарайман инвалидсемпе улăштарнă».

* * *

Курск облаçĕнчи ирĕке кăларнă Логовое ялĕн çыннисем, нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем тискер ĕçсем туни çинчен каласа панă. Ялта икĕ нимĕç виллине тупнă пулнă. 88 çынна гитлеровецсем çăва çине хуса кайнă та вĕсене айăплисен ячĕсене калаттарасшăн пулса нумайччен асаплантарнă. Темĕн чухлĕ асаплантарсан та никам та калакан пулман. Вара фашистла палачсем арман комбиначĕчи рабочие Кузьма Унковские, грузчике Иван Купина, комбайнера Максим Неронова, Александр Подставкин, Василий Сопатов, Иван Демьянов тата ытти колхозниксене те, пурĕ 20 çынна персе пăрахнă.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Вырăнти промышленность предприятийĕсен социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсем

Чăваш АССР Совнаркомĕ вырăнти промышленность предприятийĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи январь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă.

Чăваш АССР Совнаркомĕ вырăнти промышленность предприятийĕсен февраль уйăхĕнчи социализмлă ăмăртăвĕнче Сĕнтĕрвăрри, Шăхасан тата Ишлей райпромкомбиначĕсем мала тухнă тесе йышăннă.

Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне Сĕнтĕрвăрри райпромкомбинатĕнчех хăвармалла тунă (райсовет исполкомĕн председателĕ Маклашкин юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕн вырăнти промышленность енĕпе ĕçлекен заместителĕ Соколов юлташ, райпромкомбинат управляющийĕ Сигаев юлташ, парторг Тимофеев юлташ, завком председателĕ Копылов юлташ) тата ĕçре уйрăмах палăрнă работниксене премилеме райпромкомбината 15.000 тенкĕ преми пама йышăннă; Соколов юлташа райпромкомбината панă 15.000 тенкĕ укçаран 1.000 тенкĕ преми памалла тунă.

Шăхасан райпромкомбинатне (райсовет исполкомĕн председателĕ Скворцов юлташ, райпромкомбинат управляющийĕ Платонов юлташ) ĕçре палăрнă работниксене премилеме 10.000 тенкĕ преми пама йышăннă, Шăхасан райсовет исполкомĕн председательне Скворцов юлташа райпромкомбината уйăрса пана укçаран 1.000 тенкĕ преми памалла тунă.

Ишлей райпромкомбинатне (райсовет исполкомĕн председателĕн вырăнти промышленность енĕпе ĕçлекен заместителĕ Романов юлташ, райпромкомбинат управляющийĕ Хорасев юлташ) ĕçре уйрăмах палăрнă работниксене премилеме 5.000 тенкĕ укçа памалла тунă.

Февраль уйăхĕнче Улатăр тата Канаш горпромкомбиначĕсем, Элĕк, Вăрнар, Калинино, Куславкка, Комсомольски, Хĕрлĕ Чутай, Октябрьски, Первомайски, Пăрачкав, Советски, Сĕнтĕр, Вăрмар, Чкаловски, Шăмăршă, Çĕмĕрле, Етĕрне, Тăвай, Елчĕк тата Шупашкар райпромкомбиначĕсем лайăхрах ĕçленине палăртнă.

Совнарком кунпа пĕрлех çакна палăртнă: райпромкомбинатсем пĕтĕм продукци кăларас тĕлĕшпе плана тултарнă пулин те, Наркомместпром (Егоров) тата районсенчи, хуласенчи промкомбинатсенчен чылайĕшĕ ассортиментсем тăрăх тата уйрăмах кирлĕ изделисем тăрăх продукци кăлармалли плана тултарайман. Совнарком Чăваш АССР Вырăнти промышленность Халăх Комиссарне Егоров юлташа, райсоветсемпе хула совечĕсен исполкомĕсен председателĕсене тата промкомбинатсен управляющийĕсене март уйăхĕнче продукци кăлармалли плана пур ассортиментсем тăрăх та пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнма хушнă.

Совнарком Йĕпреç райсовет исполкомĕн председательне Алексеев юлташа, Красноармейски райсовет исполкомĕн председательне Александров юлташа, Кувакино райсовет исполкомĕн председательне Кругликов юлташа, Çĕрпӳ райсовет исполкомĕн председательне Хабаров юлташа тата Шупашкар хула совет исполкомĕн председательне Аникин юлташа унти промкомбинатсем начар ĕçленине кăтартса панă тата вĕсене март уйăхĕнчи плана пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнма хушнă.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

ПАРТОРГАНИЗАЦИ КОЛХОЗА ЛАЙĂХ ЕРТСЕ ПЫРАТЬ

ШĂХАСАН. (Хамăр корр.). Атнашри пуçламĕш парторганизацинче 5 коммунист. Вĕсем пурте ответлă вырăнсенче ĕçлеççĕ. ВКП(б) членĕ Васса Степанова Киров ячĕпе тăракан колхоз председателĕ пулса ĕçлет. Е. Пигальцовпа С. Никитин коммунистсем колхоз бухгалтерĕпе счетовочĕ пулса ĕçлеççĕ.

Киров ячĕпе тăракан колхоз Ухманти «Победа» колхозпа (председателĕ коммунист И. Захаров) ăмăртса ĕçлет. Икĕ колхозĕ те çуракине тĕплĕн хатĕрленессишĕн, кăçал пысăк тухăçлă тырпул туса илессишĕн вăйлăн кĕрешеççĕ.

Васса Степанова колхоза лайăх ертсе пырать. Колхоз кăçалхи çуракине тĕплĕн хатĕрленсе çитрĕ. Ялхуçалăх машинисене январь уйăхĕнчех юсаса лартнă, вăрлăхсене сортласа хунă. Уя 3.900 лав ытла тислĕк кăларнă, 96 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 85 центнер кĕл пухса хатĕрленĕ.

Парторганизаци лашасене пăхас ĕçри обезличкăна пĕтерессишĕн куллен тăрăшать. Лашасене çураки валли епле хатĕрленине тĕрĕслесе тăма коммунистсемпе комсомолецсене уйăрнă.

Колхозниксем хушшинче массăллă-ăнлантару ĕçне аван йĕркеленĕ. Иртнĕ çулта колхозра 19 номер, бригадăсенче 37 номер стена хаçачĕ кăларнă. Кăçалхи икĕ уйăх хушшинче колхозра 4 номер, бригадăсенче 16 номер стена хаçачĕ кăларнă.

Коммунистсемпе комсомолецсем пурте агитаторсем пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем колхозниксене партипе правительствăн постановленийĕсене, Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене тата Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсем çинчен çырнă боевой эпизодсене ăнлантарса параççĕ, çавна май колхозниксене стахановла ĕçлеме мобилизациллеççĕ.

Çак кунсенче агитаторсем колхозниксене Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ 1943 çулхи февралĕн 23-мĕшĕнче панă приказа ăнлантарса пачĕç.

— Сталин юлташăн приказĕ пире татах та вăйлăнрах ĕçлеме, çĕршывпа фронт валли ытларах тырпул, аш-какай, пахча-çимĕç парса тăма чĕнет, — теççĕ колхозниксем.

— Эпĕ 78 çула çитрĕм ĕнтĕ. Апла пулин те çак хăрушă тапхăрта манăн çамрăксенчен юлас килмест. Ĕçленĕ-çемĕн ĕçлес килет. Иртнĕ çулта эпĕ 327 ĕçкунĕ турăм. Кăçал тата вăйлăнрах ĕçлеме сăмах паратăп, 500 ĕçкунĕ тума обязательство илетĕп, — тет колхозри паллă стахановец Василий Константинов.

Çавăн пекех 65 çулхи Григорий Морозов, иртнĕ çулта 541 ĕçкунĕ тунăскер, кăçал 600 ĕçкунне çитерме пулчĕ.

Çулпуçăн приказне ĕçпе ответлесе, колхоз кăçал кашни гектартан вăтам шутпа 20 центнер тырă туса илме, выльăх-чĕрлĕхсен йышне ӳстерме пулчĕ.

Колхоз паянхи кун тĕлне выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур выльăхсем енĕпе те ирттерсе тултарнă. Пĕлтĕр 30 кролик аминчен 547 çăвăр илнĕ. Колхозăн фермисенче халĕ планпа пăхнинчен 9 ĕне, 40 сысна, 31 сурăх ытларах.

Çак çитĕнӳсене йăлтах колхоза коммунистсем лайăх ертсе пынипе, массăллă-ăнлантару ĕçне пĕлсе организациленипе тунă.

КОММУНИСТСЕМ ПРИМЕРЛĂ ĔÇЛЕÇÇĔ

КАЛИНИНО. Партин Алгазинăри «Чăваш Коммуни» колхозри организацинчи коммунистсем пурте тенĕ пекех ответлă вырăнсенче ĕçлеççĕ, производствăра малта пыраççĕ.

Сăмахран, М. Ласточкина выльăх-чĕрлĕх ферминче ĕçлет, Ф. Николаев чугунçул транспорчĕ валли вутă турттаракансен бригадине ертсе пырать.

М. Ласточкина юлташăн 30 сурăхран планпа 35 путек пăхса илмелле пулсан, иртнĕ çул вăл 40 путек илчĕ. Путексене пурне те лайăх пăхса ӳстернĕ. Ласточкина юлташăн паха примерĕ фермăри ытти работницăсене стахановла ĕçе мобилизацилет.

Ф. Николаев юлташ ертсе пыракан бригада чугунçул транспорчĕ валли вутă турттармалли çулталăкри плана 83 процент тултарчĕ. Вăрман касакансен Е. Прокопьев юлташ ертсе пыракан бригади ĕç нормине тăташах 160 процент таран тултарса пырать. Е. Прокопьев хăй яланах 2 норма ытла туса ĕçлет. Производствăра малта пыракан Н. Прокопьев юлташа парторганизаци нумай пулмасть ВКП(б) ретне илчĕ.

Ю т ç ĕ р ш ы в с е н ч е

США хĕрарăмĕсем совет хĕрарăмĕсене саламлаççĕ

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). США çар информаци бюровĕ совет хĕрарăмĕсем патне яма США-ри обществăллă деятельницăсенчен саламсем нумай илнĕ.

США президенчĕн арăмĕ Элеонора Рузвельт хăйĕн саламĕнче çапла çырать: «Совет Союзĕн хĕрарăмĕсене пулăшса, Америка хĕрарăмĕсем вăрçă мероприятийĕсене пурне те хутшăннă. Вĕсем хăвăртрах çĕнтерессишĕн кĕрешме хатĕр тăраççĕ.

Вăрçă пĕтнĕ хыççăн тĕрлĕ çĕршыври хĕрарăмсем кашни çĕршыврах тумалли ĕçсене пурнăçлана çĕрте пĕр кăмăллă пулса ĕçлеме тăрăшĕç. Америка хĕрарăмĕсем ку тĕлĕшпе совет хĕрарăмĕсемпе пĕрлешсе ĕçлеме кăмăл тăваççĕ тесе эпĕ шанса тăратăп. Пĕрлешсе ĕçлесе тăрсан, пĕрлешӳллĕ нацисен хĕрарăмĕсем пысăк ĕçсем тума пултарĕç».

Пĕрлешӳллĕ Штатсен ĕç министрĕ г-жа Перкинс çапла çырать: Пĕрлешӳллĕ çĕршывсене кирлĕ хĕçпăшалсем туса кăларассине ӳстерес шутпа çар завочĕсене Америка хĕрарăмĕсем ытларах та ытларах хутшăнаççĕ. Тĕнĕл держависемпе кĕрешме хĕçпăшал туса кăларнипе вĕсем Россия тата ытти çĕршыв хĕрарăмĕсемпе пĕр харăс утаççĕ. Америка хĕрарăмĕсем Россия хĕрарăмĕсене саламлаççĕ. Хальхи вăхăтра США-ра 16 миллион хĕрарăм производствăра ĕçлеççĕ. Çак çул вĕçне çитиччен вĕсен çумне 2 миллион хĕрарăмран кая мар хутшăнмалла. Тĕнĕл держависене хирĕç кĕрешекен пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсем Америка хĕрарăмĕсем çине, вĕсем çĕнтерме кирлĕ производство ĕçне активлăн хутшăнĕç, тесе шанса тăма пултараççĕ».

Америка çарĕнчи хĕрарăмсен вспомогательнăй корпусне ертсе пыракан полковник Оветта Хобби çапла пĕлтерет: «Совет хĕрарăмĕсен тĕлĕнмелле патриотизмĕпе хăюлăхĕ çинчен каласа пама та пĕлес çук. Америка хĕрарăмĕсем вĕсен паттăр кĕрешĕвне савăнса сăнаса тăраççĕ. Вырăс хĕрарăмĕсен кĕрешӳре йышăнса тăракан вырăнĕпе Америка хĕрарăмĕсем мухтанса тăраççĕ. Совет хĕрарăмĕсем пĕр ывăнмасăр ĕçлени пирĕншĕн пример пулса тăрать».

«Хĕрарăмсен ĕçĕпе сарлакан усă курас тĕлĕшпе сирĕн çĕршывра тунă опыт, — тенĕ производствăллă профсоюзсен контресĕн хĕрарăм пайĕн саламĕнче, — эсир ĕçлекен хĕрарăмсен ачисемшĕн тăрăшни, сирĕн хĕрарăма арçынпа танах ĕçлесе ĕçукçи илме май паракан йĕрке, — çаксем пурте пире хавхалантаракан çăлкуçсем пулса тăраççĕ».

СССР хĕрарăмĕсен ячĕпе саламсем тата çаксенчен килнĕ: Америкăри тинĕс-çар флотĕнчи хĕрарăмсен вспомогательнăй корпусне ертсе пыракан лейтенант Макафирен, ĕç министерствин советникĕнчен, Гарвард университечĕн профессорĕ пулса ĕçленĕ Алиса Гамильтонран, Норвегире Америка посланникĕ пулса ĕçленĕ г-жа Гарриманран, производствăллă профсоюзсен конгресĕн исполкомĕн членĕнчен Элеонора Нельсонран тата ыттисенчен те.

Гитлеровецсем оккупациленĕ çĕршывсенче Германие хирĕç тунă выступленисем

Словаки патриочĕсем Братислава çывăхĕнчи Вайнорири нимĕç аэродромне тапаннă.

Краков облаçĕнчи поляк-партизансем 4 çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Варшава урамĕнче Германи полицине сутăннă çынна вĕлернĕ. Поляксен пĕр ушкăнĕ Варшавăри полици участокне пырса тапаннă. Германи полицейскийĕсене вĕлерсе пĕтернĕ хыççăн поляксем хĕçпăшалсене илсе тарнă.

Копенгагенра пĕр урамра бомба çурăлнипе 3 гитлеровец вилнĕ.

Францире çамрăк патриотсен ушкăнĕ Дижон районĕнче Италие каякан çар грузĕ тиенĕ таварнăй поезда ӳпĕнтерсе янă. 15 вагон тата паровоз çĕмĕрĕлнĕ.

Норвегире нимĕçсен ишсе çӳрекен докне тĕппипех пĕтернĕ. (ТАСС).

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, мартăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи сывлăш-çар флочĕн командованин пĕлтерĕвĕнче каланă тăрăх, мартăн 5-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле союзниксен йывăр бомбардировщикĕсем Неаполь гаванĕ çине вĕçсе пырса тапаннă. Гаваньре пушарсем тухнă.

ЛОНДОН, мартăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 6-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле бомбардировщиксен соединенийĕсем Эссен çине вĕçсе пырса вăйлăн тапаннă.

ЛОНДОН, мартăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер кăнтăрла американецсен вăйлă бомбардировщикĕсем Лорианри тата Брестри (Франция) тĕрлĕ объектсем çине вĕçсе пырса тапаннă.

Тăшманăн истребительнăй авиацийĕ тата зенитнăй артиллери вăйлăн персе тăнă пулин те, нумай бомбăсем тӳрех лекнине паллă тунă.

Мартăн 6-мĕшĕнче Англи бомбардировщикĕсем Эссен çине вĕçсе пырса тапаннă чухне хула çине икшер тоннăллă 150 бомба пăрахнă пулнă. 40 минута хушши пынă бомбардировка вăхăтĕнче питĕ вăйлă взрывсем пулнă. Хулан пит пысăк районне вут хыпса илнĕ.

Мартăн 6-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсем Ла-Маншăн Франци çыранне вĕçсе пырса тапаннă. Ирхине ирех Англин кăнтăр-хĕвелтухăç çыранĕнче Дюнкеркенчен вăйлă взрыв сассисем илтĕннĕ.

ТУНИСРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, мартăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Согженана хулинче (Çурçĕрти Тунис) çапăçусем пынă. Хула урамĕсенче пуçланса кайнă çапăçусене пула атакăна чарса лартнă. Мартăн 4-мĕшĕнче Франци войскисен малти отрячĕсем Шотт-Джерид ятлă тăварлă кӳллĕн хĕвеланăçĕнчи Нефту пунктне тытса илнĕ.

ЛОНДОН, мартăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри войскисен штабĕн пĕлтерĕвĕнче çапла каланă: союзниксен бронетанковăй колоннисем ĕнер хĕвелтухăçнелле куçса Нишон хулине йышăнса илнĕ. Вăл Кайруан хулинчен çирĕм миля хĕвеланăçнерех пулать.

КĔСКЕН

Атлантика океанĕ тăрăх каравансене хӳтĕлесе пыма Англире ятарласах çĕнĕ карап тунă. Тĕрлĕ калибрлă вăйлă артиллерипе зенитнăй установкăсемсĕр пуçне çĕнĕ карап çинче подводнăй лодкăсене тата рейдерсене хирĕç кĕрешме торпеда аппарачĕ пур.

* * *

Бразилире фашистла заговор хатĕрленине пĕлнĕ. Çав заговора хутшăннă çынсем Крюзалт хулинчи армейски чаçсенче восстани тума хатĕрленнĕ. Çак ĕçе 24 çын хутшăннă. Айăпланакансем хушшинче арми лейтенанчĕ Штульцнер, лютеран священникĕ Хаст т. ыт. те пур.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чăваш АССР Наркомземĕн Сĕнтĕр сывăхĕнчи районсен колхоз шкулĕ 1942—43 вĕренӳ çулне бригадир—животноводсен тата колхоз счетовочĕсен курсне илесси çинчен пĕлтерет (иккĕмĕш набор).

Икĕ отделенинче те 5 уйăх вĕренмелле. Курса 7 çул вĕреннисене илеççĕ.

Заявленисене 1943 çулхи мартăн 15-мĕшĕччен илеççĕ. Заявлени çумне çакăн пек документсем хушса памалла: 1) райзо е колхоз панă командировка; 2) хăçан çуралнине кăтартакан свидетельство; 3) вĕреннине кăтартакан свидетельство; 4) сывлăх мĕнлине кăтартакан справка.

Икĕ отделенинче те 1943 çулхи мартăн 10-мĕшĕнчен пуçласа вĕренме тытăнаççĕ. Вĕрентессине тӳлевсĕрех вĕрентеççĕ.

Заявленисемпе ыйтусене çак адреспа ямалла: Сĕнтĕр районĕ, Толиково ялсовчĕ, Кади-Касы ялĕ, МРКШ.

Дирекци.

РСФСР Наркомземĕн январĕн 24-мĕшĕнчи 41-мĕш номерлĕ приказĕ тăрăх, Шупашкарти **Коммунально-строительнăй техникум** апрелĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа **Энергетически техникум** пулса тăрать. Вăл малашне хуласенчи электростанцисемпе электросеть валли техник-электриксем тата механиксем хатĕрлет.

Адресĕ çапла: Шупашкар, Калинин урамĕ, 3-мĕш №-лĕ шкул çуртĕ.

Дирекци.

Спецторга плановик-экономист, çĕвĕçсем, атă çĕлекенсем, конюхсем кирлĕ.
Çак адреспа ыйтмалла:
Шупашкар, Плеханов урамĕ, 5.

Вăрман сыхлас тата вăрман лартас ĕçĕн управленине Шупашкарта ĕçлеме лесоводсем, бухгалтер-ревизор, бухгалтер-финансист тата склад заведующийĕ кирлĕ, районсенче ĕçлеме лесоводсем тата бухгалтерсем кирлĕ. Работниксене хваттер тата вутă параççĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар, Урицкий ур., 36. Тел. 7—25. 2—2

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

КТ 659 Типография № 1. Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. б. 58. 42 п.